Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

*95-96 (7949-7950) №№* ✻ *Шӑмат кун, 2011 ҫулхи чӳк (ноябрь) уйӑхӗн 26-мӗшӗ* ✻ *Хакӗ ирӗклӗ*

## Пурнӑҫри чи хаклӑ та чуна ҫывӑх ҫынсем

**Эсир сӑн ӳкерчӗкре куракан хӗрарӑмсем – пурте амӑшӗсем. Ҫемье ӑшшине тытса тӑнипе пӗрлех вӗсем ял тӑрӑхӗнче тата районта иртекен мероприятисене яланах интересленсе хутшӑнаҫҫӗ. Хастарскерсем кашниех хӑйӗн ӗҫӗнче маттур (сулахайран сылтӑмалла): Лидия Григорьевна Пагеева Ильинкӑри вӑтам шкулта бухгалтерта вӑй хурать, Нинель Владимировна Бычкова – Тренккӑри ҫемье врачӗн уйрӑмӗнчи медсестра, Аэлита Юрьевна Храмова – Ильинкӑри ялти библиотека ертӳҫи. «Анне пулма ҫӑмӑл мар. Ачасене тӗрӗс воспитани парасси хӑй кӑна мӗн чуль вӑй-хал ыйтать. Кунсӑр пуҫне амӑшӗн ытти тивӗҫсем те чылай», – теҫҫӗ хисеплӗ хӗрарӑмсем.**

**Ӗнер вӗсене тата районти ытти хастар амӑшӗсене чысласа районта уяв иртрӗ. Савӑнӑҫлӑ лару-тӑрура пурнӑҫри чи хаклӑ та чуна ҫывӑх ҫынсене ачасем илемлӗ юрӑ-ташӑпа, ӑшӑ сӑмахсемпе саламларӗҫ. Арҫынсем – республикӑри гостехнадзор ертӳҫи В. Димитриев, район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю. Иванов, «Моргаушская» чӑх-чӗп фабрики» акционерсен уҫӑ пӗрлешӗвӗн ертӳҫи Н. Ванеркин тата хӑш-пӗр ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем – пурнӑҫра амӑшӗн вырӑнне нимӗнпе виҫсе хаклама май ҫуккине аса илтерсе уява пухӑннӑ хастар амӑшӗсене Тав ҫырӑвӗсем парса чысланипе пӗрлех тутӑрсем те ҫыхса ячӗҫ.**

**Н. НИКОЛАЕВА сӑн ӳкерчӗкӗ.**

Ыран – Амӑшӗн кунӗ



### ХАКЛӐ ЕНТЕШӖМӖРСЕМ!

Сире пурне те Амӑш кунӗпе саламлатӑп!

Анне – ҫӗр ҫинчи чи илемлӗ сӑмах. Ҫак чи ҫывӑх ҫын пирӗн ҫумра чух кӑмӑл та хӑпарать, ыйварӑхсене те ҫӗнтерме пулать, малалла пурӑнма, мӗн те пулин ыррине тума вӑй-хал хушӑнать. Анне – пуҫламӑшӗн пуҫламӑшӗ, ҫемье никӗсӗ, хавхалану ҫӑл куҫӗ. Кашни ҫыншӑн вӑл чун пуянлӑхӗ пулса тӑрать. Анне – пире ҫут ҫанталӑкпа ҫыхӑнтарса тӑракан сыпӑк.

Мӗн ачаран эпир аннен алӑ ӑшшине, унӑн сисӗмлӗ чӗре таппине туйса тӑратпӑр. Ачисем сывлӑхлӑ, ҫемьере тӑнӑҫлӑх пулсан – аннесем те телейлӗ. Паян Чӑваш Енре ҫемьесене тӗреклетес тесе амӑш тата ачалӑх ыйтӑвӗсем ҫине пысӑк тимлӗх уйӑраҫҫӗ. Нумай ачаллӑ ҫемьесене ҫӗр лаптӑкӗсем пани, тӗрлӗ программӑсемпе ҫамрӑк ҫемьесене пурӑнмалли ҫурт-йӗр ыйтӑвӗсене татса пама пулӑшни – курӑмлӑ тӗрек. «Республикӑри амӑш (ҫемье) капиталӗ ҫинчен» Указа та алӑ пусса ҫирӗплетнӗ. Ача сачӗсем ҫӗкленеҫҫӗ.

Ҫӗр ҫинчи пур ырӑлӑх та амӑшӗн юратӑвӗ витӗр тухнӑ: эпир пурӑнакан пӳрт, пирӗн сӗтел ҫинчи ҫӑкӑр, эпир суйласа илнӗ пурнӑҫ ҫулӗ. Аннесене кашни кунхи ӗҫӗсемшӗн, куҫ хупман каҫсемшӗн, пире парнелекен ӑшӑ юратушӑн тата пире телейлӗ тунӑшӑн тав тӑватпӑр.

Ҫак уяв кунӗнче пурне те чи ӑшӑ сӑмахсемпе саламласа ырӑ сывлӑх, ҫемьере тӑнӑҫлӑх тата телей сунатӑп.

**М. ИГНАТЬЕВ,**
**Чӑваш Республикин Президенчӗ.**

### ХИСЕПЛӖ АННЕМӖРСЕМ!

Сире Ача амӑшӗн кунӗ ячӗпе чун-чӗререн саламлатӑп.

Аннерен хакли никам та ҫук. Пирӗншӗн кашниншӗн чи хакли, чи ҫывӑххи вӑл. Эсир ачӑрсене кун-ҫул парнелетӗр, мӗн ӗмӗр тӑршшӗпех вӗсем сирӗнтен телейлӗрех пулччӑр тесе тӑрӑшатӑр. Мӗнпе танлаштарма пулать-ши ачисемшӗн чӗререн сунакан аннен таса юратӑвне, унӑн иксӗлми ырӑ кӑмӑлне? Тавах, аннемӗрсем, пире ҫуратнӑшӑн, юратнӑшӑн, ятланӑшӑн, каҫарнӑшӑн, ӑнланнӑшӑн, ҫын тунӑшӑн.

Юратнӑ аннесем! Эсир – пурнӑҫ илемӗ, ҫемье ӑшши те, унӑн ҫути те эсирех. Эсир пулсан чунра та ӑшӑ, пӳртре те ҫутӑ. Вӗҫсӗр-хӗрсӗр ачашлӑхӑрпа юрататӑр кашни ачӑр валлиех ҫитет сирӗн. Пӗр канӑҫ курмасӑр ачӑрсене пурнӑҫ ҫулӗ ҫине кӑларассишӗн тимлетӗр, ҫӗр-шыва юрӑхлӑ ҫынсем тӑватӑр. Вӗсене ыйвӑр чухне пулӑшатӑр, ырӑ сӗнӳпе вӑй паратӑр, ӑш сӑмахпа хавхалантаратӑр. Тавах сире, аннемӗрсем, эсир пурришӗн, вӗҫсӗр-хӗрсӗр ыр кӑмӑлӑрпа чун илемӗшӗн, чӑтӑмлӑхӑрпа ҫирӗп кӑмӑлӑршӑн.

Эсир ачӑрсене тӗрӗс воспитани парса ӳстернипе пӗрлех кулленхи ӗҫре район, республика, ҫӗр-шыв экономикине ҫирӗплететӗр. Тавах сире ҫакӑншӑн та.

Сывлӑхӑр чир-чӗр мӗнне ан пӗлтӗр, кун-ҫулӑр телейлӗ те вӑрӑм килтӗр. Ачӑрсем те сирӗн телейлӗ пулччӑр, вӗсен пурнӑҫ ҫулӗ уҫӑлсах пытӑр. Ывӑл-хӗрӗрсемпе, мӑнукӑрсемпа савӑнса кӑна пурӑнмалла пултӑр.

**Ю. ИВАНОВ,**
**район администрацийӗн пуҫлӑхӗ.**

Декабрӗн 4-мӗшӗнче – суйлав

## Эсир сасӑлама хатӗр-и?

Декабрӗн 4-мӗшӗнче кашни суйлавҫӑ алла сахалтан та виҫӗ бюллетень илет.

Пӗрне РФ Патшалӑх Думине суйлама ҫичӗ партие кӗртнӗ. Тепӗр иккӗшӗ – ЧР Патшалӑх Канашне депутатсем суйламаллисем.

Чӑваш парламентне депутатсем суйлама икӗ бюллетень пани ҫакӑнпа ҫыхӑннӑ.

Патшалӑх Канашӗнче пӗтӗмпе 44 депутат пулать. 22 депутатне пӗрлехи округпа партисен списокӗпе суйлатпӑр. Ку бюллетене политика партийӗсен регионти уйрӑмӗсене кӗртнӗ. Гражданин хӑй килӗштерекен партишӗн сасӑлать.

Тепӗр 22 депутатне пӗр мандатлӑ округсем тӑрӑх суйламалла. Ҫак тӗллевпе Чӑваш Республикинче 22 округ ҫине пайланӑ. Ку бюллетеньте кандидатсен ячӗсем пулаҫҫӗ. Сӑмахран, пирӗн 8 № Муркаш округӗнче тӑватӑ кандидат.

Ҫавӑн пекех пирӗн районта уйрӑм участоксемпе вырӑнти суйлавсем те иртеҫҫӗ. Кун пек чухне кунти суйлавҫӑсем алла тӑваттӑмӗш бюллетень те илеҫҫӗ. 1 № Октябрь округӗпе (Муркаш ялӗнче) район парламенчӗн депутатне суйламалла. 5 № Якаткасси округӗпе Чуманкасси ял тӑрӑхӗн Пухӑвӗн депутачӗшӗн сасӑламалла.

Пӗтӗм республика территорийӗнче 1176 суйлав участокӗ йӗркеленӗ пулсан, районта – 52 участок. Вӗсене пурне те пушар хӑрушсӑрлӑх енӗпе тӗрӗсленӗ. Суйлав ирттерме юрӑхлӑ тесе йышӑннӑ.

Участоксенчи суйлав комиссийӗсем декабрӗн 4-мӗшӗнче 8 сехетрен пуҫласа 20 сехетчен ӗҫлеҫҫӗ.

Суйлавччен шутлӑ кунсем юлаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та граждансен суйлав участокӗ ӑҫта вырнаҫнипе те интересленмелле, списокра хӑвӑр ят пуррине те ыйтса пӗлмелле. Суйлава кайма паспорта та хатӗрлесе хумалла. Суйлав кунӗнче тӗрлӗ сӑлтавпа участока пырайманнисен килте сасӑлама ыйтса 14 сехетчен заявлени памалла.

Кӗскен

## Наци радио калаҫать

Чӑваш Ен наци радио 105,0 МГц частота ҫинче эфира тухма пуҫлать. Ҫапла вара ӑна пирӗн районта пурӑнакансем те ҫӑмӑллӑнах итлеме пултараҫҫӗ.

Президент Ҫырӑвне сӳтсе яватпӑр

## «Пире ырӑ туни хӑвӑра та ырӑпах таврӑнӗ»

Чӑваш Республикинче 2011 ҫулта социаллӑ программӑна вӑя кӗртме 18 миллион тенкӗ уйӑрнӑ. Ҫак укҫа-тенкӗн пӗр пайӗ – ватӑ ҫынсемпе инвалидсен Йӳҫкассинчи интернат ҫурт тӑррине юсама. Чӑваш Республикинче пурнӑҫланакан социаллӑ программӑна туллинрех вӑя кӗртме Раҫҫей Пенси фончӗ 2000 ҫултанпа пулӑшса пырать. Ҫавна май 11 ҫул хушшинче Раҫҫей шайӗнчен Чӑваш Ен Пенси фондне 228 миллион тенкӗ ытла куҫарнӑ: 154 миллион тенкӗ халӑха социаллӑ пулӑшу паракан учрежденисен пурлӑх базине ҫирӗплетме, 74 миллион тенкӗ ӗҫлемен пенсионерсене адреслӑ пулӑшу пама.

Ноябрӗн 24-мӗшӗнче районти историпе краеведени музейӗнче хисеплӗ пенсионерсем ЧР Президенчӗн Ҫырӑвне хаклама, ытти ыйту тавра калаҫма пухӑнчӗҫ. Вӗсемпе тӗл пулма республика шайӗнчен РФ Пенси фончӗн ЧР уйрӑмӗн ертӳҫи Р. Кондратьева, «Раҫҫейри пенсионерсен союзӗн» Чӑваш регионӗнчи общӑстӑлла организацийӗн ертӳҫи В. Сапожников килчӗҫ. Ларӑва пенси фончӗн районти управленийӗн ертӳҫи Е. Александрова ертсе пычӗ.

– Юлашки 10 ҫулта ватлӑхпа паракан ӗҫ пенсийӗн вӑтам виҫи 6 хут ӳсрӗ. Социаллӑ пенсин вӑтам виҫи пенсионера пурӑнма кирлӗ республикӑра ҫирӗплетнӗ чи пӗчӗк виҫерен пысӑкрах. Чӑваш Енре ӗҫлеме пултаракан ӳсӗмрен аслӑрах граждансен 80 проценчӗ хушма социаллӑ пулӑшу илсе тӑрать. Ҫак тӗллевсем валли республика бюджечӗнчен кӑҫал 1 миллиард та 590 миллион тенкӗ уйӑрнӑ, ҫитес ҫул унтан та ытларах пулӗ. Палӑртса хӑвармалла, финанс кризисӗн условийӗсенче тӗнчери пӗр ҫӗр-шыв та пенсионерсене ҫавнашкал пулӑшу пама палӑртакан йышӑнусем туман. Апла пулсан пирӗн малашлӑх пысӑк, пурнӑҫлани витӗмлӗ. Ҫавӑнпа хамӑр пурнӑҫа хамӑрӑн та тӗреклетме тӑрӑшмалла, – терӗ Роза Алексеевна пухӑннисене умри пысӑк ӗҫре тӗрӗс утӑм тумаллине палӑртса.

Ял тӑрӑхӗсенче пенсионерсен канашӗсене йӗркеленӗ. Вӗсен ертӳҫисем – активлӑ ҫынсем, вӗсем тӑрӑшнипе урамсенче тирпей-илем кӗртес ӗҫ пурнӑҫланать тата ытти те. Пенсионерсен вара пирӗн кулленхи пурнӑҫра пысӑк витӗм кӳреҫҫӗ. Акӑ районти хисеплӗ ватӑ ҫынсем Чӑваш Республикин Президенчӗ патне ветеран ята тивӗҫес ыйтупа тухни те тимлӗхсӗр юлмарӗ. Ҫапла вара ҫӗнӗ саккунпа килӗшуллӗн 300 яхӑн пенсионер заявлени ҫырма ӗлкӗрнӗ, ку ӗҫ малалла пырать. Ҫавӑн пекех малашне вӑрҫӑ ачисем тӗлӗшпе те ырӑ улшӑну пулӗ. Ҫакӑн пирки пухӑннисене социаллӑ пулӑшу пайӗн ертӳҫи Н. Петрова пӗлтерчӗ.

– Эпир, пенсионерсем, ветерансем, Чӑваш Республикин Президенчӗн Ҫырӑвне ырӑпа кӑна хаклама пултаратпӑр. Пурнӑҫ ырӑ еннелле улшӑннине туятпӑр, куратпӑр. Малашне пурнӑҫлама палӑртни вара пире татах та хавхалантарать. Акӑ ача амӑшӗсем, ачасем тӗлӗшпе те мӗнле кӑна ырӑ улшӑну тумарӗ пулӗ правительство шайӗнче. Ҫавӑнпа та пире ырӑ туни хӑвӑра та ырӑпах таврӑнӗ тесе калас килет ҫӳллӗ шайри ӗҫченсене. Хамӑр ача чухнехине е пенси укҫи илеймен тапхӑра, ача укҫине кӗрпепе, ытти таварпа панине аса илер-ха тата. Апла пулсан паянхи пурнӑҫа хурлама сӑлтав ҫук пек туйӑнать, – терӗ Чуманкасси ял тӑрӑхӗнчи З.Н. Кадыкова пухӑннисене.

Хисеплӗ ветерансем пурнӑҫра чылай нуша тӳссе ирттернӗ. Ҫавӑнпа та вӗсен сӗнӗвӗсем те вырӑнлӑ, ыйтӑвӗсем те чуна тивекеннисем. Ветерансен ыйтӑвӗсене, сӗнӗвӗсене район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов шута илчӗ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Ыйхрав

## Черетлӗ лару

Депутатсен районти Пухӑвӗн черетлӗ 12 ларӑвӗ ноябрӗн 30-мӗшӗнче пулать.

Кун йӗркине районӑн кӑҫалхи бюджетне улшӑнусем кӗртес, районӑн 2012 ҫулхи экономикӑпа социаллӑ аталану прогнозӗ, районӑн 2012 ҫулхи бюджечӗ ҫинчен ыйтусене кӗртнӗ.

Лару 10 сехетре райадминистрацин ларусен залӗнче пуҫланать.

Саламлатпӑр

Предприниматель ӗҫне кӳлӗннӗренпе 20 ҫул ҫитнӗ ятпа Мӑрсакасси ялӗнчи ырӑ чунлӑ **Петр Терентьевич ТЕРЕНТЬЕВА** пур кӑмӑлтан ӑшшӑн саламлатпӑр. Хӑвӑрӑн тӑрӑшулӑхпа, ҫирӗп сывлӑхлӑ вӑй-халпа, Турри пулӑшнипе ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ чикӗсем ҫӗнсе илме сунатпӑр, малалла та сирӗнте ҫынсене пулӑшас кӑмӑл нихӑҫан та ан иксӗлтӗр.

**Тӑванӗсемпе ООО «Заря» ӗҫченӗсем.**



Пирӗн юратнӑ ҫыннӑмӑр – Отаркка ялӗнче пурӑнакан **Галина Либкнехтовна КИРИЛЛОВА** ноябрӗн 24-мӗшӗнче 55 ҫул тултарчӗ. Сумлӑ юбилейпа саламласа эпир сана ӑшшӑн саламлатпӑр. Яланах хавас кӑмӑл-туйӑмлӑ, ҫирӗп сывлӑхлӑ пул. Телейпе ӑнӑҫу санпа пӗрле пулччӑр, ӗмӗтӳсем ҫитсе пычччӑр. Эпир сана юрататпӑр, хисеплетпӗр, санпа мухтанатпӑр. Эс пуртан хамӑра телейлӗ туятпӑр. Тата нумай ҫул пурӑнма Турри сана вӑй-хал парнелетӗр, чир-чӗртен упраса тӑтӑр.

**Пысӑк саламспа: мӑшӑрӗ, 5 хӗрӗпе кӗрӳшӗсем, мӑнукӗсем, ҫывӑх тӑванӗсем.**

СПРАВЕДЛИВАЯ РОССИЯ

4 декабря
выборы депутатов



Евгений Углев

Возродим село!

КАНДИДАТ ОТ СПРАВЕДЛИВОЙ РОССИИ

Печатная площадь предоставлена бесплатно Региональному отделению политической партии «Справедливая Россия» в Чувашской Республике в соответствии со ст. 48 Закона «О выборах депутатов Государственного Совета Чувашской Республики».


Министрпа калаçатпăр

# «Спорта юратăр, вăл сирĕн пурнăçăн пĕр пайĕ пулса тăрĕ»

***Юлашки вăхăтра Чăваш Республикинче сывă пурнăç йĕркине тата спортăн массăллă аталанăвне пропагандăласси çине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Халĕ физкультурăпа спорт комплексĕсем, çĕнĕ стадионсем, хуласенчи картишсенче ачапăчана вылямалли паянхи куна тивĕçтерекен площадкăсем хăйсем патне йыхравлаççĕ. Кăтартусем япăх мар. Çак тата ытти ыйтусем тавра ЧР физкультура, спорт тата туризм министрĕпе А.А. НИКОЛАЕВПА калаçрăмăр.***

**– Анатолий Арсентьевич, иртнĕ çул пирĕн республикăри спортсменсем наградăсем чылай çĕнсе илчĕç. 2011 çулта пĕтĕмĕшле кăтартусене мĕнле хак пама пулать?**

– Паянхи кун та ӳсĕмсем пур, малашне те пулĕç, лайăххисем хыççăн шанчăк паракансем тăраççĕ. Вĕсем пĕлтерĕшлĕ ăмăртусенче çĕнтерӳ пьедесталĕ çине хăпарĕç тесе шутлатăп. Чăваш спортсменĕсен çитĕнĕвĕнче темиçе çул физкультурăпа спорта аталантарас тĕлĕшпе, сывă пурнăç йĕркине тытса пырас енĕпе тĕллевлĕ ĕçленин тӳпи пур. Чăваш Енре спорта пысăк ăмăртусем ирттернипе татах та аталантарса пыратпăр. Паянхи кун республикăра спортăн 60 енĕпе занятисем иртеççĕ. Çакăн çинче çеç чарăнса тăмалла мар. Аякри ялсенче ачасене, вăй питти çынсене спортпа анлăрах туслашма майсем туса памалла.

Спорт сооруженийĕсем тăвас енĕпе Чăваш Республики пилотлă регионсен шутне кĕрет. Федераллă тĕллевлĕ программăн пĕтĕмлетĕвĕсем мĕнле-ши?

Федераллă, республика тата муниципаллă бюджетсен укçитенкипе республикăра 22 физкультурăпа спорт комплексĕ хута кайрĕ. Кунсăр пуçне икĕ стадион тунă. Тĕп хуламăрта спорта юратакансене çулталăк тăршшĕпех каток хăй патне йыхравлĕ. Çĕнĕ Шупашкарти 50 метрлă бассейн, юлан утçăсен комплексĕ хула çыннисемшĕн çеç мар, республикăра пурăнакан ытти çынсемшĕн те парне пулĕ.

**– Республикăра спорт объекчĕсем нумай тăваççĕ-ха. Шупашкар хулине илес пулсан унта лару-тăру мĕнлерех?**

– Республика ертӳçисем çакăн çине пысăк тимлĕх уйраççĕ. Шупашкарти «Олимпийский» стадионта 7,5 пин вырăнлă Пăр дворецĕ тăвас ĕç пуçланнă. Раççей Федерацийĕн Спортпа туризм министерстви пулăшнипе Шупашкарта регионсем хушшинчи олимп вăййисене хатĕрлекен пысăк тăватă центр тума палăртнă. Унăн тĕллевĕ – çăмăл атлетикăна, маунтинбайка, ухăран пересси не, биатлона тата йĕлтĕр спортне аталантарасси. Вĕсенче кашнинчех спотсменсене хăнăхусем ирттермелли залсем пулĕç. Унта республикăри спорта юратакан кашни çынах сывлăха çирĕплетме, ӳт-пĕве аталантарма пултарĕ.

Ку çеç те мар: «Единая Россия» политика партийĕн программипе хулара тата виçĕ комплекс тумалла.

**– Республика территорийĕнче юлашки çулсенче пысăк спорт ăмăртăвĕсем иртрĕç. Малашне пулĕç-и вĕсем?**

– Паллах, вĕсен списокĕ çулсерен ӳссе пырать. Çакă спорт федерацийĕсемпе министерство килĕштерсе, ăнланса ĕçлениинчен килет. 2011 çулта çеç Раççей шайĕнчи бадминтон, хĕвел тухăç кĕрешĕвĕсен, самбо, йывăр атлетика, спорт гимнастики, ухăран тĕл пересси енĕпе ăмăртусем иртрĕç. Чи пĕлтерĕшли – çăмăл атлетика енĕпе пулнă Раççей чемпионачĕ.

Кунсăр пуçне Чăваш Енри Спортпа туризм министерстви Раççейри çăмăл атлетика енĕпе командăсем хушшинче Европа чемпионачĕ, çурма марафон енĕпе Тĕнче чемпионачĕ ирттерессипе çинчен заявка тăратнă.

**– Чăваш Енре туризм мĕнле шайра? Малашне туризмăн хăш енĕсене аталантарасшăн?**

– Республикăра «Развитие туризма на 2011–2016 годы» тĕллевлĕ программа ĕçлеме пуçларĕ. Унпа килĕшӳллĕн 2017 çулта Чăваш Енре пур енĕпе те тивĕçтерекен пĕрлехи комплекс туса хумалла. Ку тĕллевпе республика бюджетĕнчен 117 миллион тенкĕ уйăрнă.

«Чувашия», «Волжанка», «Чувашия-курорт», «Солнечный берег», «Надежда», «Салампи» санаторисем пирки республика тулашĕнче пурăнакансем те пĕлеççĕ. Туристсем пирĕн республикăри çут çанталăкра чун каниччен канма, таса сывлăшпа сывлама май пуррине палăртаççĕ.

**– Анатолий Арсентьевич, республика, район çыннисене мĕн суннă пулăттăр?**

– Спорта юратăр. Вăл сирĕн пурнăçăн пĕр пайĕ пулса тăрĕ. Çакă сире сывлăха çирĕплетме, чир-чĕр мĕнне манма пулăшĕ. Хăвăра та кулленхи пурнăçăрта лайăххрах туйма пуçлăр. Пирĕн республика спортсменĕсем тĕнче, çĕр-шыв шайĕнче те палăрасса шанас килет.

Аукцион

## Администрация Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики извещает о проведении открытого аукциона

**Форма торгов** – открытый аукцион.

**Наименование аукциона** – открытый аукцион на право заключения договора купли-продажи муниципального имущества Моргаушского района, подлежащего приватизации в 2011 году.

**Основание проведения аукциона** – решение об условиях приватизации имущества принято Собранием депутатов Юнгинского сельского поселения Моргаушского района от 21.11.2011г. № С-11/2 «О прогнозном плане (программе) приватизации муниципального имущества Юнгинского сельского поселения Моргаушского района на 2011 год»; постановление Администрации Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики № 85 от 21.11.2011г «Об условиях приватизации муниципального имущества Юнгинского сельского поселения».

**Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов:** 429551, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Юнга, ул. Малые Чуваки, 34 телефон (83541) 69-7-33, 69-8-07, **e-mail: http://gov.cap.ru/main.asp?govid=431**

**Контактные лица**: Фомин. В. В., глава администрации Юнгинского сельского поселения, тел.: (83541) 69-7-33, 69-8-07.

**Предмет аукциона**: право заключения договора купли-продажи муниципального имущества Моргаушского района, подлежащего приватизации в 2011 году.

**Начальная (стартовая аукционная) цена**: начальная (стартовая аукционная) цена муниципального имущества определяется на основании отчета об оценке, выполненного независимым оценщиком.

**Перечень муниципального имущества Моргаушского района подлежащего приватизации в 2011 году:** Лот №1: Помещение №3, расположенное на первом этаже одноэтажного бревенчатого здания (Лит.А), находящееся по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с. Юнга, ул. Малые Чуваки, дом 34, Литер: А; общая площадь помещения – 47,3 кв.м.; 1992 года постройки, инвентарный номер БТИ-13104.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка –**103190 (Сто три тысячи сто девяносто) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Сроки предоставления заявок:** с 26 ноября 2011 года по 26 декабря 2011 года.

Задаток перечисляется на реквизиты: Получатель платежа – Администрация Юнгинского сельского поселения Моргаушского района, ИНН 2112389364, лицевой счет 05123М00012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810775140000005 в Чувашском ОСБ №8613 г. Чебоксары, кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа: задаток на участие в аукционе по продаже объекта муниципального имущества 26.11.2011г.

Для участия в аукционе претенденты представляют следующие документы:

заявку; платежный документ с отметкой банка об исполнении, подтверждающий внесение соответствующих денежных средств. Физические лица предъявляют документ, удостоверяющий личность. Юридические лица дополнительно представляют следующие документы: нотариально заверенные копии учредительных документов; решение в письменной форме соответствующего органа управления о приобретении имущества (если это необходимо в соответствии с учредительными документами претендента и законодательством государства, в котором зарегистрирован претендент); сведения о доле Российской Федерации, субъекта Российской Федерации, муниципального образования в уставном капитале юридического лица; опись представленных документов. В случае подачи заявки представителем претендента предъявляется надлежащим образом оформленная доверенность.

Определение участников аукциона состоится 27 декабря 2011 года по месту нахождения организатора конкурса: 429551, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Юнга, ул. Малые Чуваки, дом 34. Дата, время и место проведения открытого аукциона 28 декабря 2011 г. (по московскому времени): Лот №1- 10.00 по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Юнга, ул. Малые Чуваки, дом № 34.

По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора купли-продажи муниципального имущества. Договор купли-продажи муниципального имущества заключается в срок не позднее 10 рабочих дней со дня подписания протокола. Победителем аукциона признается лицо, предложившее наибольшую цену.

# ЫРЛĂХ-ПУРЛĂХ. ТИМЛĔХ. ЙĔРКЕЛĔХ.

**ДЕКАБРĔН 4-МĔШĔ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХ КАНАШĔН ДЕПУТАЧĔСЕН СУЙЛАВĔ**

# ПИРĔН ПРОГРАММА

ЕДИНАЯ РОССИЯ

### РЕСПУБЛИКĂРИ ÇУЛСЕНЕ ТĔПЛĔН ЮСАМАЛЛА, ПĔТĔМ ПОЛИКЛИНИКĂСЕМПЕ БОЛЬНИЦĂСЕНЕ ÇĔНĔ ОБОРУДОВАНИПЕ ТИВĔÇТЕРМЕЛЛЕ

Çулталăк вĕçлеиччен медицина ĕçченĕсен шалăвне 30 процент ÿстермелле. Партин «Земский врач» проектне пурнăçа кĕртме яла ĕçлеме каякан медицина енĕпе аслă пĕлÿ илнĕ çамрăксене пĕрер миллион тенкĕ уйăрса памалла.

### ВĔРЕНŸ ТЫТĂМНЕ ÇĔНĔЛĔХСЕМ КĔРТЕС ĔÇЕ МАЛАЛЛА ТĂСМАЛЛА

Çитес виçĕ çулта 24 ача садне хута ямалла, 20 садике юсаса çĕнетмелле. Çапла майпа ача садне черете тăрассине пĕтермелле. Çулталăк вĕçлеиччен вĕрентекенсемпе воспитательсен шалăвне 30 процент ÿстермелле.

### РЕСПУБЛИКĂРИ СПОРТА АТАЛАНМА ПУЛĂШМАЛЛА

Шупашкарта Пăр керменне тата виçĕ физкультурăпа сывлăх комплексне, Хĕрлĕ Чутайра, Тăвайра, Вăрнарта физкультурăпа сывлăх комплексĕсене хута ямалла.

### ХУЛАСЕМПЕ ЯЛСЕНЧЕ ÇУЛ ТĂВАС ЕНĔПЕ МАЛАЛЛА ĔÇЛЕМЕЛЛЕ

Шупашкарти урамсемпе картишсене юсас енĕпе малалла вăй хумалла. М-7 «Атăл» федераци автотрассине юсаса çĕнетмелле. Сăр шывĕ урлă хăтланă кĕпере, Етĕрне айккипе каякан çула юсамалла.

### ЯЛА ПУЛĂШУ КŸМЕЛЛЕ

Чăваш Республикинче экологи енĕпе таса апат-çимĕç хатĕрлекен центрсем уçмалла. Çĕмĕрле районĕнче – топинамбур, Çĕрпÿ районĕнче – сысна какайĕ, Етĕрне тата Тăвай районĕсенче – сĕт тирпейлекен центрсем тата ытти те.

### ÇЫНСЕНЕ ТИВĔÇЛĔ ĔÇ УКÇИ ТŸЛЕМЕЛЛЕ

Республикăри вăтам ĕç укçине 20 пин тенкĕ таран çитермелле. «Солнечная долина» - хĕвел батарейисем, «Русич» - авиаци техники, «Гален», «Гипор-М» - строительство материалĕсем кăларакан çĕнĕ, хальхи вăхăтпа тан пыракан производствăсене уçмалла. Тивĕçлĕ шалуллă çĕнĕ ĕç вырăнĕсем уçакан пысăк, вăтам тата пĕчĕк предприятисене пулăшмалла.

### ЖКХ ТЫТĂМĔНЧЕ ЙĔРКЕ ТУМАЛЛА

Тытса тăракан компанисене тĕрĕслессине вăйлатмалла. Газ, электроэнерги, ăшă хакĕсене тăтăш ÿстернине чармалла. 2013 çулччен пĕтĕм нумай хваттерлĕ çуртсенче шут приборĕсене лартмалла. Энергине перекетлекен технологисемпе усă курмалла, çынсене хваттер укçи тÿленĕ чух перекетлеме пулăшмалла.

### РЕСПУБЛИКĂРИ ПАТШАЛĂХ ТАТА МУНИЦИПАЛИТЕТ ОРГАНĔСЕН ĔÇĔН ПАХАЛĂХНЕ ŸСТЕРМЕЛЛЕ

Чиновниксен йышне чакарас енĕпе тата вĕсен ретĕнчи коррупцине хирĕç кĕрешекен мероприятисене ирттермелле.

Печатная площадь предоставлена бесплатно Региональному отделению Всероссийской политической партии «Единая Россия» в соответствии со ст. 48 Закона «О выборах депутатов Государственного Совета Чувашской Республики».

С.М. Михайлов (Янтуш) çуралнăранпа – 190 çул

## С. Янтуш – илемлĕ литературăн кÿлепине ăсталаканĕ



**Муркаш тăрăхĕ тĕнчипе паллă çынсемпе чăннипех те пуян: С. Янтуш, Г. Алексеев, Н. Никольский, В. Егорова, В.Соколова тата ыттисем те. Вĕсем кашниех пирĕншĕн ырă тĕслĕх вырăнĕнче. Ноябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 15-мĕшĕччен чăвашсен пĕрремĕш писателĕ, этнографĕ, фольклорисчĕ Спиридон Михайлович Янтуш (1821 –1861) çуралнăранпа 190 çул çитнине халаллана уйăхлăх пырать. Ку тĕлĕшпе район администрацийĕ йышăну кăларнă, ятарлă ĕç комиссийĕ йĕркеленĕ.**

Чăваш ячĕпе малтанласа калаçаканĕ С. Михайлов пулнă. Вăл 1860 çулта М.П. Погодин патне «... да и не должно мне переменять жизнь свою, когда из миллиона чуваш и черемис я первый еще писатель в России» тесе çырать. Çапах та «эпĕ пĕрремĕш» тенинче европăлла историлĕх те çук мар. Раççейри культура талккăшĕнче вăл чăваш валли малтанласа уйрăм вырăн çĕнсе илнĕ. Çакна вырăссем те, ют çĕр-шыв çыннисем те йышăннă. Спиридон Михайловича чăваш хушшинче чунне парса вăй хунă вырăс çутлăхçи тесе хаклаççĕ ăсчахсем. Çапла вара пирĕн çак таранччен сарăлса пынă çырулла культура талккăшне чăваш ячĕпе чи малтан никам та мар, С. Янтуш уçнă тесе хăюллăнах калама пултаратпăр. Çакна тума ăна çав вăхăтри общество юхăмĕсем, чи малтан славянçăсен юхăмĕн идейисем, ĕçĕ-хĕлĕ пулăшнă.

...Ашшĕ хăй ывăлне пĕчĕккĕллех хутла вĕрентме ĕмĕтленнĕ. Çак тĕллевпех ăна Чикме хулине купса патне илсе кайнă. Анчах та хула мещенĕсемпе купса тарçисем унтан тăтăшах мăшкăлласа кулнă. Тăвăлса çитнĕскер çакăнтан пăрахса каять. Выçăллă-тутăллă пурăннине пăхмасăрах пултарулла ача хăй тĕллĕнех хут ĕçне хăнăхать. Каярах вара тĕрлĕ вулăс правленийĕсенче, земство полицийĕнче, ытти çĕрте ĕçлет. 1842 çултан пуçласа мĕн виличченех Чикмери земство сучĕн куçаруçи пулнă. Вăл тăтăшах тĕрлĕ произведени, кĕнеке хайлать, чăвашла ултă инсценировкăпа сценка çырать. С. Янтуш çыравçă кăна мар, ăста куçаруçă та пулнă. Çапла вара вăл чăваш çырулла сăмахлăхне драма жанрĕсен системине кĕрекен йăла калаçăвĕсене те малтанласа кĕртнĕ теме пулать. Хăйĕн пултарулăхри ăсталăхне туптаса вăл чăваш илемлĕ литературин кÿлепине ăсталанă, хăйĕн хыççăн килекенсем валли çул такăрлатнă.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Ыран – Амăшĕн кунĕ

## Санăн тимлĕхÿ пурин валли те çитет

Кăçалхипе вун виççĕмĕш çул ĕнтĕ Раççейре Ача амăшĕн кунне уявлаççĕ, çак куна чыслани анне пĕлтерĕшĕ ÿссех пынине çирĕплетет.

– Пирĕн çулсем малаллах каяççĕ, хамăрăн та ачасем ÿссех пыраççĕ, апла пулин те кун-çул парнелекенсем пурăннă чухне эпир пурте ачасемех-ха. Маншăн анне – чи сăвапли, пурнăç тыткăчи. Кашнин амăшĕ ачи-пăчине сĕнÿпе е ытти енĕпе пулăшма тăрăшать. Пирĕн вара ăна-кăна пăхмасăр аннесем валли яланах пушă вăхăт, ăшă сăмах тупмалла, – тесе пуçларĕ сăмахне Хорнуй ял тăрăхĕнчи Платкасси ялĕнчи Михайлова Ирина Семеновна **(сăн ÿкерчĕкре)**.



Ирина Семеновна хăй анне пулнипе тата хăйне пурнăç çулĕ çине кăларнă амăшĕ тĕрĕс-тĕкел пурăннипе чăнахах та телейлĕ. Ачалăх, çамрăклăх çулĕсенче вăр-вар пулнăскер кунне-çĕрне пĕлмесĕр вĕлле хурчĕ евĕр лара-тăра пĕлмест: тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕх усрать, сутлăх çăмата йăвалать, хурт-хăмăр ĕрчетет, арçын водительтен кая мар автомашинăпа çÿрет тата ытти те. Унăн ĕçченлĕхне, пултарулăхне хăшĕн-пĕрин ăмсанмалли кăна юлать.

– Çапах та хĕрарăм вăл е ку ĕçе пултарнипе мар, чи малтан амăшĕн тивĕçне туллин пурнăçланипе пĕлтерĕшлĕ. Хĕрарăма ахальтен мар ĕнтĕ Турри амăшĕ пулма пилленĕ, апла пулсан унăн хăйĕн ачине кăна мар, хÿтлĕх кирлĕ ытти ачана та хапăл тума, пулăшу кÿме пултармалла, – кăмăллăн пĕлтерчĕ Ирина Семеновна.

**Р. МАКАРОВА.**

Вулакан пултарулăхĕ

## Юратнă анне

Аннене эп юратса  
Çыртăм сăвă васкаса,  
Саламлас сăмахăма  
Хут çине шăрçаласа.  
Ир-ирех тăрать анне,  
Ĕç нумай ун кунĕпе:  
Тутлă апат пĕçерет,  
Чирлесен пире сиплет.  
Юрататăп аннене,  
Пулăшатăп кулленех.  
Сывлăх пултăр çирĕп сан,  
Пул эс пирĕнпе ялан.

**Анастасия АТЛАСКИНА.**
**Атапай шкулĕ, 5 класс.**

Официально

**Сведения о выявленных недостоверных фактах в сведениях, представленных кандидатами в депутаты Государственного Совета Чувашской Республики пятого созыва, зарегистрированных по Моргаушскому одномандатному избирательному округу № 8**

| № п/п | Фамилия, имя и отчество кандидата | Представлено кандидатом | Результаты проверки | Организация, предоставившая сведения |
|---|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | 4 | 5 |
| | | Доходы | | |
| 1 | Карягин Федор Александрович | 330300,03 руб., доход от трудовой деятельности (зарплата), Филиал Российского государственного университета 249390,00 руб., пенсия, Управление Пенсионного Фонда России | Не представлены сведения о доходе, полученных от КП «Содружество» в сумме 2791 руб., ФГОУ ВПО ЧГУ им. Ульянова –15840 руб., ГОУ «Чувашский республиканский институт образования» Министерства образования и молодежной политики ЧР – 467,52 руб., Министерства природных ресурсов и экологии ЧР – 105 руб, ФГОУ ВПО «ЧГСХА» - 480 руб. | УФНС РФ по Чувашской Республике |
| | | Акции, иное участие в коммерческих организациях | | |
| 2 | Углев Евгений Петрович | Нет | Не представлены сведения, что является учредителем ЗАО «Агро-Урожай», доля участия 5,1%. | УФНС РФ по Чувашской Республике |
| | | Доходы | | |
| 3 | Ямангеев Владимир Владиславович | 16000 руб., доход от предпринимательской деятельности КФХ «Ямангеев В.В.» | Не представлены сведения о доходе, полученных от ОАО «Горно-металлургическая компания «Норильский никель» в сумме 1050 руб., ОАО «Газпром» в сумме 5258 руб. | УФНС РФ по Чувашской Республике |

**Моргаушская ТИК.**

# ВЕРНА НАРОДУ, НУЖНА СТРАНЕ!

## МОРГАУШСКИЙ ИЗБИРАТЕЛЬНЫЙ ОКРУГ №8

КАНДИДАТ ПО ОДНОМАНДАТНОМУ ОКРУГУ
(в бюллетене – голосование
по фамилии, имени, отчеству)

## КАРЯГИН Федор Александрович



Родился в 1945 году в деревне Старое Ахпердино Батыревского района в семье колхозников. Трудовую биографию начал в колхозе «Гвардеец». Служил в Советской Армии в ракетных войсках. Закончил биолого-географический факультет Горьковского педагогического института. Работал заместителем директора в школах Чувашии и Тюменской области. Как талантливый руководитель, был приглашен на работу в Совет Министров Чувашии и со временем занял высокий пост министра экологии и природных ресурсов Чувашской Республики.

Кандидат географических наук, доцент. Преподавал в Чувашском государственном педагогическом университете. В настоящее время – заведующий кафедрой, декан экономического факультета Чебоксарского филиала РГСУ.

Женат, две дочери, внучка.

КАНДИДАТЫ ПО ПАРТИЙНОМУ СПИСКУ
В бюллетене - голосование за
**Чувашское республиканское отделение КПРФ**

## АНИСИМОВ Владимир Ильич



Родился в 1949 году. Образование высшее. Работал ветеринарным врачом, директором совхоза «Шумшевашский», главным ветеринарным врачом Аликовского района. Депутат Госсовета Чувашии второго созыва. С 2001 по 2005 год – глава самоуправления Аликовского района. Женат. Три сына, две дочери.

**Первый секретарь Аликовского райкома КПРФ.**

## КОНДРАТЬЕВА Татьяна Петровна



Родилась в 1957 году. Образование высшее. Закончила Чувашский государственный педагогический институт имени И. Я. Яковлева. Работала учителем математики в Урмарском районе и в СОШ №14 г. Чебоксары, воспитателем в общежитии. В настоящее время – менеджер продаж в частном предприятии. Замужем, две взрослые дочери.

## Вернём украденную Родину!



ЦЕНЫ НА ПРОДУКТЫ И ЛЕКАРСТВА ПОД КОНТРОЛЬ ГОСУДАРСТВА!



БЕСПЛАТНАЯ МЕДИЦИНА ДЛЯ ВСЕХ!



БЕЗОПАСНОСТЬ НА НАШИ УЛИЦЫ! КРИМИНАЛУ - БОЙ!



КАЧЕСТВЕННОЕ И ДОСТУПНОЕ ОБРАЗОВАНИЕ ДЛЯ ВСЕХ!



ДЕШЕВОЕ ТЕПЛО И ЭЛЕКТРИЧЕСТВО В КАЖДЫЙ ДОМ



ВОЗРОДИМ ДРУЖБУ НАРОДОВ!

Печатная площадь предоставлена бесплатно Республиканскому отделению политической партии «Коммунистическая партия Российской Федерации» в соответствии со ст. 48 Закона «О выборах депутатов Государственного Совета Чувашской Республики».

**Ыран – Амăшĕн кунĕ**

# Тата мĕн кирлĕ çĕр çинче

– Халиччен никама та усал сунман,– тет Çатракасси ял тăрăхĕнче пурăнакан Р.К. Соловьева. – Çемьесенче мăшăрĕсемпе те килĕштерсе пурăнччăр.

Пурте Роза Ксенофонтовна пек шухăшласан, чуна ыраттаракан самантсем пурнăçра чылай сахалланнă пулĕччĕç. Р.К. Соловьевăна ватлăх кунĕнче упăшкипе шăкăл-шăкăл пурăнма пӳрмерĕ шăпа. 48 çултах пурнăçран уйрăлчĕ мăшăрĕ. Пĕчченех пурнăç çулĕ çине кăларчĕ ачисене хĕрарăм. Халĕ те хăнăхнă йăлипе час-часах кукăль пĕçерет. Вара мăшăрĕн сăмахĕ аса килет. «Çиекен пулсан пĕçерĕн-ха ăна», – тетчĕ вăл. Мăшăрĕ механизаторта ĕçленĕскер, çынпа пĕр чĕлхе тупма пĕлетчĕ. Вĕсем патĕнчен çын татăлмастчĕ. «Эс киле çынсăр килме хăран пулĕ?» – тесе шӳтлетчĕ вара Роза мăшăрĕпе Иосифпа. 10 ачаллă çемьере çуралнăскер, Роза Ксенофонтовна 11 ачаллă çемьене качча тухнă. Çавăнпа та ыттисем тăнă çĕре пĕр кăмака кукăль пĕçерсе кăларасси хăнăхнă ĕçчĕ. Халĕ вара кукăль пĕçерсе кăларать те ывăл-хĕрĕ патне çула тухать. 5 ача çуратса ӳстернĕскер, вĕсемпе, вĕсен 15 ачипе савăнса пурăнать, хăйне телейлĕ тесе шутлать. «Ачасем пурри, вĕсен пурнăçĕ йăлтах йĕркеллĕ пулсан, тата мĕн кирлĕ пире»,– тет вăл. Унтан çапла хушса хурать: «Виçĕ ывăл та салтака юрăхлă пулчĕ. Гриша Афганистан республикинче 2 çул çурă пограничник пулчĕ. Киле тĕрĕс-тĕкел таврăнчĕ. Çакă мар-и вара вăл телей?»

Роза Ксенофонтовнăн пурнăçĕ аслă ăру çыннисеннинчен, тен, нимĕнпех те уйрăлса тăмасть пуль, çемьере кĕçĕнни-ха ку тесе уйрăммăн ачашламан пуль ăна та ашшĕ-амăшĕ. 6 çултах ĕне сума пуçланă вăл. Ун чух колхозра сĕм çĕрлеччене ĕçлетчĕç. Амăшĕ ĕçрен килнĕ çĕре пĕчĕк хĕр ача ик витрепе сĕт суса лартатчĕ. «Юрать ман çак ача пур», – тетчĕ амăшĕ пĕчĕк «кил хуçи» çине пăхса.

Çуллахи вăхăтра Роза вĕсене тырă вырма пулăшнă. Алла пĕрремĕш хут çурла тытнă чух 7–8 çулта пулнă вăл. «Пĕр кĕлтелĕх вырни те усăллă», – тетчĕ амăшĕ. Хăй ĕçлекен пĕчĕк хĕрĕ çине пăхса савăнатчĕ. «Çак алăра ман 22 çĕвĕ», – тет паян 67 çулхи Роза Ксенофонтовна.

Хĕл кунĕсенче те вăл вăхăтра ял ачисен çумĕнчен ĕç хăпман.

– Уроксем тусан анне сӳс шăртлаттаратчĕ, кĕнчеле çыхса парса çип арлаттаратчĕ. Çав çипрен пир тĕртеттĕмĕр, – куç умне кăларать çав вăхăта паян тивĕçлĕ канури Р.К. Соловьева. –Ун чухне çи-пуçа та килтех тунă-çке. Тумтир магазинта пулсан та укçи пулман пуль. Атте çĕн çăпата туса парсан вара мĕн тери савăнаттăмăр.

Ачалăхĕ нумая пымарĕ Розăн. 7 класс пĕтернĕ хыççăн ăна Наум пиччĕшĕ фермăна пĕчĕк пăрусем пăхма илсе çӳреме пуçларĕ. Унта ĕçлекен аппăшĕ, Е.Кириллова, ăна пĕрмай мухтатчĕ. Çапла майпа 2 çул опыт пухнă хыççăн Роза Ксенофонтовна сурăх фермине ĕçлеме куçать. Ĕçчен хĕре Çатракассинчи çерем çĕрсем уçнă çĕртен таврăннă Н.Соловьев та тӳрех асăрхать. 18 çулта Роза качча тухать.

Мĕн ĕмĕр тăршшĕпех иккĕшĕ те хуçалăхра ĕçлерĕç Соловьевсем: мăшăрĕ – механизаторта, Роза Ксенофонтовнăн фермăра ĕçленĕ çулĕсем кăна 20 çул ытла. Çак ĕçренех тивĕçлĕ канăва тухрĕ.

Паян та алă усса ларма юратмасть Р.К. Соловьева. Муркашри ветерансен хорне çӳрет, сăвăсем çырать. Çемье сăн ӳкерчĕкĕсен альбомне илет те çамрăклăха, ачасем пĕчĕкрех пулнă вăхăтсене куç умне кăларать. Халĕ ачисем пурте хăйсен пурнăç çулĕпе утаççĕ ĕнтĕ. Вĕсенчен пушар чаçĕн ертӳçи те, предприниматель те, тăван хуçалăхра ĕçлекенни те пур – пурте ура çинче çирĕппĕн тăраççĕ.

Çулла вара Роза Ксенофонтовна вăрмана кăмпана çӳрет. Ачисемпе мăнукĕсем амăшĕн, асламăшĕн, кукамăшĕн кукăльне кăна мар, вăл пуçтарнă кăмпана та хапăл тусах астивеççĕ. Р.К. Соловьевăшăн вара чи хакли – çапла хăйĕн пысăк çемйипе пĕрле пуçтарăнса шăкăл-шăкăл калаçни. Кунтан хакли мĕн пултăр амăш чĕришĕн.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Çыру йĕрĕпе**

# Мунча хăçан хутĕç-ши?

***«Пире, Мăн Сĕнтĕр салинче пурăнакансене, пĕр ыйту канăççăрлантарать. Мăн Сĕнтĕрте пур вăхăтра та коммуналлă хуçалăх мунчи ĕçленĕ. Маларах вара фабрика мунчи халăха йышăннă. Ун чухне шывне лашапа кӳрсе килнĕ. Октябрь уйăхĕнче 4 хутчен мунча хутрĕç, юлашкинчен вара мунча пачах та ĕçлеме пăрахрĕ. Кунта халăх йышлăн çӳретчĕ. Кирек камшăн та мунча яланах чи кирлĕ объект пулнă, уйрăмах пĕччен ватă çынсемшĕн, мунча çуккисемшĕн. Халĕ вара хĕл варринче ăçта кайса çăвăнмаллаши? Мунча ĕçлеменнин сăлтавĕ мĕнре-ши? Ку тĕлĕшпе Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.В. Лаптев тивĕçлĕ хурав параймарĕ пире. Çавăнпа та «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат урлă тĕрĕс хурав илес терĕмĕр».*** Çыру вĕçĕнче сакăр çын алă пуснă.

**Ку çырăва илсенех район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕпе В.Г. НИКИТИНПА çыхăнтăмăр.**

– Мăн Сĕнтĕр мунчине çӳрекенсен чун ыратăвне эпир ăнланатпăр. Кирек кама та пурăнма тивĕçлĕ услови кирлĕ. Çак ыйтăва татса парасси – пирĕн тӳрĕ тивĕç. Маларах Мăн Сĕнтĕрти коммуналлă хуçалăх тулли хăватпа ĕçленĕ чухне мунчана тытса тăма пысăк йывăрлăх пулман. Халĕ вара ку объекта Муркашри коммуналлă хуçалăх тытăмне куçартăмăр. Малашне мунча малтанхи графикпах ĕçлĕ. Шăмат кун, ноябрĕн 26-мĕшĕнче, вăл халăха йышăнĕ, – пĕлтерчĕ Владимир Германович.

**Суд материалĕсем тăрăх**

# Çынна сăмахпа кӳрентернĕшĕн те айăпласçĕ

Раççей Федерацийĕн Уголовлă кодексĕн 130-мĕш статйин 1-мĕш пайĕнче çынна кӳрентернĕшĕн, çыннăн чысĕпе тивĕçлĕхне варалананăшăн айăпласси не пăхнă. Кун пек преступлени тунăшăн саккунпа килĕшӳллĕн айăпа кĕнĕ çынна 40 пин тенкĕ таран е виçĕ уйăхри ĕç укçи чухлĕ штраф пама, 120 сехет таран обязательнăй ĕçсене явăçтарма, 6 уйăх таран юсанмалли ĕçсене яма, пĕр çулталăк таран ирĕкрен хăтарма пултараççĕ.

Пурнăçра граждансем ыттисене кӳрентернин тĕслĕхĕсем сахал мар. Çапах та нумайăшĕ хăйсен прависене пăснă пирки суда хӳтлĕх шыраса пымасть.

Уголовлă процессуаллă кодексăн 20-мĕш статйин 2-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн асăннă йышши преступленисем хăрпăр хăйсем айăплаканнисем шутне кĕреççĕ. Кун пек ĕçсене инкек тӳсекен е унăн саккунлă представителĕ ыйтнипе кăна пуçараççĕ. Инкек тӳсекенпе айăпланакан хăйсем хушшинче килĕшсе татăлаççĕ пулсан ĕçе чарса лартма тивĕç. Ĕçе чарса лартасси суд приговор йышăнма канашлу пӳлĕмне кайиччен вăйра пулать. Ытларах чухне суд ларăвĕн залĕнче граждансем хăйсем килĕшни пирки пĕлтереççĕ, каçару ыйтаççĕ тата пĕр-пĕрне каçараççĕ. Кун йышши ĕçсем пирки приговор йышăннă тĕслĕхсем нумаях мар.

Хăш-пĕр чухне ĕç приговор йышăнассипе те вĕçленет. Акă Муркаш районĕнчи 1-мĕш номерлĕ суд участокĕн миравай судйи И. гражданин тĕлĕшпе приговор йышăнчĕ. Асăннă гражданин Оринин ял тăрăхĕнчи пĕр ялта 2011 çулхи майăн 15-мĕшĕнче А. гражданин тĕлĕшпе киревсĕр сăмахсем каланă.

Судра И. гражданин хăйĕн айăпне йышăнмарĕ. Вăл А. гражданин тĕлĕшпе ун пек сăмахсем каламан, ăна кӳрентермен имĕш. Вăл А. гражданина пахча сухаласа пама ыйтнă кăна пулать. Çакна илтсен А. тăрук çилленсе кайнă та: «Хăмапа çапатăп»,– тенĕ. Вара вăл килне кайнă.

Кăшт каярах вăл хăйĕн участокне чăх-чĕп хăвалама, кайран пĕве хĕрне кайнă. Çул çинче вăл Т. пахчинчен килекен А. гражданина тĕл пулнă. Унпа хирĕçес темен, каçару ыйтнă. «Эпĕ сана нимĕн те туман вĕт-ха»,– тенĕ.

Хăйĕн айăпне йышăнмасть пулин те, И. гражданинăн айăпне судра пĕтĕмпех çирĕплетме май килчĕ. Вăл киревсĕр сăмахсемпе ятлаçнине Т. тата Л. свидетельсем те çирĕплетсе пачĕç. Çакă вара чăнлăхпа пĕр килни палăрчĕ. А. гражданин ялта ытти çынсем умĕнче те ырă ятпа кăна палăрса тăрать, ялти çынсене май килнипе пулăшма тăрăшать. И. гражданина вара лайăх енĕпе палăртакан çук.

Тĕрĕслĕхе çирĕплетекен пур фактсене те тĕпченĕ хыççăн миравай судья инкек тӳсекенпе свидетельсен кăтартăвĕсем тĕрĕс пулнине палăртрĕ, И. гражданин А. гражданин тĕлĕшпе чăннипех те киревсĕр те тивĕçсĕр сăмахсем каланине çирĕплетрĕ.

Кун пек сăмахсем çын тивĕçлĕхĕпе чысне пăснă тĕслĕх пулса тăраççĕ. Çакă нравственноç нормисемпе килĕшсе тăмасть. Кирек камăн та тивĕçлĕхĕпе чысне те вара никама пăсма ирĕк паман.

Суд асăннă ĕçе пăхса тухса И. гражданина обязательнăй майпа 60 сехет ĕçлеттермелле тума йышăнчĕ, кунсăр пуçне мораль тĕлĕшĕнчен сиен кӳнĕшĕн А. гражданина И. гражданинран 3000 тенкĕ шыраса пама йышăну тунă.

**Т. САЛДЫРКИНА,**
**Муркаш районĕнчи**
**1-мĕш номерлĕ суд участокĕн**
**миравай судйи.**

Çивĕч ыйту

# Ĕç ветеранĕсене – çĕнĕлле пулăшу

***2012 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен, Чăваш Ен Президенчĕн 2011 çулхи октябрĕн 7-мĕшĕнчи 90-мĕш номерлĕ «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ» ята тивĕçме ирĕк пур граждансен категорийĕсем çинчен» Указĕ вăя кĕнĕ май, пенси çулĕсенчи тата хĕрарăмсемшĕн 40 çултан кая мар, арçынсемшĕн 45 çултан кая мар ĕç стажĕ пухнă 26 пин çын Чăваш Енре «ЧР Ĕç ветеранĕ» ята илес ирĕкпе усă курĕ.***

***Çакăнпа çыхăннă чи анлă сарăлнă ыйтусене Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министерствинче уçăмлатрĕç.***

**– Çак ята камсене параççĕ?**

– Президент Указĕпе «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ» ята илме тивĕçлĕ сăпатсен категори йышне анлăлатнă. Патшалăх наградисене тивĕçнĕ граждансемпе пĕрлех çак майпа пысăк ĕç стажĕллĕ – хĕрарăмсен 40 çул, арçынсен – 45 çул – çынсем те Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕсем пулма пултараççĕ.

**– Стажа кура тивĕçекен «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ» ята парасси список тăрăх хăйне хăй пулса пырать е çакна валли заявлени çырмалла-и? Çырмалла-тăк – çак ыйтупа ăçта каймалла?**

– «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ» ята автоматика йĕркипе памаççĕ, ăна илес тесен заявлени çырмалла.

Çакăн пек ята пама ыйтса çырнă заявлени çумне эсир яланах Чăваш Республикинче пурăннине, ĕç стажне, пенси çирĕплетнине кăтартакан документ памалла, пенсие çарпа пенси законодательствипе е ĕçленĕшĕн (службăшăн) пурнăç тăршшĕпе илсе тăракансен вара – 60 çула – арçынсемшĕн, 55 çула – хĕрарăмсемшĕн – çитнине ĕнентерекен документ.

Заявленисене граждансем пурăнакан вырăн тăрăх администрацин халăхăн социаллă хӳтлĕх пайĕсенче йышăнаççĕ.

**– Эпĕ тĕрлĕ çĕрте вăй хунă – колхозра та, пиравăр комбинатĕнче те. «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ» ята илме хамăн ĕç стажне мĕнле документсемпе çирĕплетме пултаратăп?**

– Ĕç стажне кăтартакан документсен переченьне тата ăна шутламалли йĕркене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2011 çулхи ноябрĕн 9-мĕшĕнчи 494-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе çирĕплетсе массăллă информаци хатĕрĕсенче пичетленĕ.

**Шута илме**

**– Ĕç стажне çирĕплетекен документсем;**
**– ĕç кĕнекисем;**
**– колхозникăн ĕç кĕнекисем;**
**– çар билечĕ;**
**– ĕç паракан е çакăн пек тивĕçе пурнăçлакан патшалăх (муниципалитет) органĕнчен илнĕ справка;**
**– архив учрежденийĕсен справкисем;**
**– право хутшăнăвĕсене кĕнĕ тапхăрта вăйра тăнă, ĕç законодательствипе килĕшӳллĕн тунă ĕç килĕшĕвĕ.**

**– «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕн» ятне стаж тăрăх парасси çинчен калакан Указра вăл 2012 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕресси çинчен вуласа пĕлтĕм. Указ 2012 çултан пенсие тухакансене кăна пырса тивнине пĕлтермести çакă?**

– Çук пĕлтермест. «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ» ята стажа кура панă чухне пенсие тухнă чухнехи вăхăт чăрмав пулмĕ.




**– Пенсие тухнă чухне манăн стаж 37 çулччĕ, кайран татах ĕçлерĕм. Халĕ вара стаж çулĕ 42 çитрĕ. «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ» ята панă чухне пенсие тухнă хыççăн стаж çумне хушăннă çулсене шута илеççĕ-и?**

– Çапла. Çакна çирĕплетекен документсене тăратсан пенсие тухнă хыççăн ĕçленине те стаж шутне кĕртеççĕ.

**– Президентăн çĕнĕ Указĕнче «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ» ята нумай çул вăй хуракансене тата патшалăх наградине тивĕçнисене парассине каланă. Хĕрăрăмăн ĕç стажĕ 40 çул, арçыннăн 45 çул пулсан патшалăх награди те кирлĕшим?**

– Çук. «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ» ята илме е Чăваш Республикин награди е çителĕклĕ ĕç стажĕ – хĕрарăмсемшĕн 40 çул, арçынсемшĕн 45 çул – кăна кирлĕ.

**– «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ» ята тивĕçме Пенси фондĕнчен справка илмелле-и?**

– Çук. «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ» ята илес тесен сирĕн ĕçленине е службăра тăнине çирĕплетме пурăнакан вырăнта халăха социаллă хӳтлĕх паракан пая заявлени çырнипе пĕрлех мĕн пур документа – ĕç кĕнеки, архив справки, çар билечĕ т.ыт. те. Стажа ĕнентересси пирки ыйту тухса тăчĕ пулсан социаллă хӳтлĕх пайĕн специалисчĕсем Пенси фончĕн управленине е ĕçпе çыхăннă справкăсем паракан вырăна хăйсемех заявка параççĕ.

**– Ĕç стажĕ манăн пĕчĕк мар – 47 çул. Вĕсенчен 6-шне Беларуçре вăй хурса ирттертĕм. «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ» ята панă чухне пур стажа та шута илеççĕ-и е Чăваш Енре пуçтарăннине кăна-и?**

– Документсемпе çирĕплетсен «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ» ята панă чухне сирĕн мĕн пур ĕç стажне – Чăваш Енрине те, Беларуçрине те – шута илеççĕ.

**– «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ» ята панă чухне ĕç çулĕсен хăш тапхăрĕсене шута илеççĕ? Ачана, хăйсем тĕллĕн ĕçлесе пурăнайман граждансене пăхни тата çар тивĕçне пурнăçланă, вĕреннĕ çулсем стаж шутне кĕреççĕ-и?**

– Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕн» ятне тата «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ» удостоверение парас йĕркепе условисене çирĕплетесси çинчен» 2007 çулхи июнĕн 13-мĕшĕнчи 127-мĕш йышăнăвне кĕртнĕ улшăнусемпе килĕшӳллĕн ĕç стажне календарь йĕркипе шутланă ĕç (служба) çулĕсем кĕреççĕ.

Çапла майпа, вĕреннĕ çулсене, çавăн пекех хăйсем тĕллĕн ĕçлесе пурăнайман граждансене пăхнă вăхăта «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ» ята панă чухне шута илмеççĕ. Çарта пулнă çулсем ĕç стажне кĕреççĕ, ачапа ларни – çав тапхăрта çын ĕç хутшăнăвĕсенче тăрсан кăна.

**– Эпĕ питĕ ир вăй хума пуçларăм. Малтан колхозра, унтан Шупашкарти электроаппаратура заводĕнче тăрăшма тытăнтăм. Стаж – 42 çул. Яланах малтисен ретĕнче пулнă. «Социализмла ăмăртусен çĕнтерӳçи» палла икĕ хут тивĕçрĕм. Пенсие тухсан вара «Ĕç ветеранĕ» ята илтĕм. Çĕнĕ Указ мĕн парать?**

– «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ» ята илмелли майсем çителĕклĕ пулсан сире çак ята «Ĕç ветеранĕ» ят пуррине пăхмасăрах пама тивĕç. Апла пулин те, законодательствăпа килĕшӳллĕн, эсир социаллă пулăшăвăн пĕр енĕпе кăна усă курма пултаратăр: е Ĕç ветеранĕ пек е Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ пек. Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕсене паракан пулăшу ĕç ветеранĕсене тивекеннинчен нимĕнпе те улшăнса тăманнине палăртса хăварни вырăнлă.




**Пĕлетĕр-и эсир?**

**● «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ» ята республикăра 2007 çултанпа параççĕ. Паянхи кун тĕлне халăха социаллă хӳтлĕх паракан пайсенче çак ята тивĕçнĕ 2028 çын шутра тăрать. Вĕсенчен 1161-шĕ граждансен çак категорийĕ валли çирĕплетнĕ социаллă пулăшупа усă курать, ыттисем вара ăна илме май паракан ытти ене суйласа илнĕ – инвалид, вăрçа хутшăннă салтакăн тăлăх арăмĕ, реабилитациленнĕ сăпат;**

**● Законпа килĕшӳллĕн республикăн Ĕç ветеранĕсен уйăхсерен тивекен 980 тенкĕ тӳлеве тата çыхăну тăкакĕсен 50 процент чухлĕ компенсацине илме май пур;**

**● Юлашки 10 çулта çулсем çитнипе паракан ĕç пенсийĕн вăтам виçи 6,1 хут ӳссе 2011 çулта республикăра 7941 тенке çитнĕ.**

**● Раççей Пенси фончĕн бюджечĕн проектĕнче 2012 çулта ĕç пенсине 9,6% (февралĕн 1-мĕшĕнчен тата апрелĕн 1-мĕшĕнчен), патшалăх тивĕçтерекен, çав шутра социаллă пенсие 14,1% чухлĕ ӳстересси;**

**● Чăваш Енре пурăнакан 340 пин çын – республикăра пурăнакансен чĕрĕк пайĕ – пенси илет;**

**● Валоризаци пĕтĕмлетĕвĕпе 308 пин пенсионерăн пенсийĕ ӳснĕ, вăтамран укçа 937 тенкĕ хушăннă;**

**● Инвалидсене укçана инвалидноç ушкăнне кура тӳлеме пуçланă. Çакă республикăра 900 ытла çын валли инвалид пенсийĕ çирĕплетме май панă;**

**● Ĕç пенсийĕн тĕп пайĕ 2007 çулта 24% хушăннă, 2009 çулхи декабрьте 31,4%. 2011 çулта социаллă пенсисен вăтам виçи 4533 тенкĕпе – ку вара республика пенсионерĕсене валли III кварталшăн çирĕплетнĕ пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçерен, 4236 тенкĕрен пысăкрах;**

**● Федераци çăмăллăхĕсемпе усă куракансен уйăхсерен тивекен тӳлевĕ 2005 çултанпа 3 хута яхăн ӳссе вăтамран 1637 тенке çитнĕ. Соцпакет хакĕ 1,7 хут пысăкланнă – 450 тенкĕрен 750 тенкĕ таран;**

**● 2011 çулта инвалидсемпе ветерансене сывлăха çирĕплетме 18185,6 пин тенкĕлĕх 1402 путевка панă.**







**Сӳтсе яватпăр**



**Анатолий ПЕЧНИКОВ,**
ЧР Композиторсен Ассоциацийĕн членĕ:

– «Чăваш Республикин Ĕç ветеранĕ» ята наградăсемпе хисеплĕ ятсене кура кăна мар, стаж тăрăх та тивĕçме май паракан документа тинех кĕтсе илтĕмĕр. Унпа пĕрлех пĕр куна та сая ярас мар тесе вăй хума хушма хавхалану тупăнчĕ.



**Татьяна ГАВРИЛОВА,**
студентка:

– Сăпайлă ĕçченсем пирĕн кашни отрасльтех нумай. Грамотăсем те илсе курман вĕсем, çапах та юратнă ĕçе чунне парса пурнăçланăшăн хисеплеççĕ вĕсене. Аслă ăрушăн – асаттесемпе асаннесемшĕн, ырми-канми тăрăшнă кашни çыншăн – питĕ савăнтăм. Ку питĕ вырăнлă, тахçантанпах кĕтнĕ Указ.

# «Пĕчĕк чухне çеç амăш кирлĕ-ши?»

Тăтăшах амăшне хĕненĕ ывăлĕ суд тенкелĕ çине унччен те ларнă-ха. Ирĕкрен пĕрре мар хăтарнăскер вара лăпланма шутламасть. Ун тĕлĕшпе татах уголовлă ĕç пуçарнă.

Сакăр вуннăмĕш теçеткере пыракан Мари кинемей картишĕнче ĕçлесе ывăннăран таврана каç сĕмĕ çапма пуçласанах пӳрте кĕрсе канма выртрĕ. Паянхи-ыранхи ĕçсем пирки шухăшласа вăл тахçанах иртсе кайнă вăхăтсем патне çитрĕ. Çемье çавăрни, ачасем çурални, асра юлнă ытти самантсемпе çыхăннă шухăшсем мĕлтлетрĕç пуçĕнче. «Ачана пĕчĕк чухне çеç амăш кирлĕ-ши? Çут çанталăкĕ хĕрсене качча каймалла тунă: пачах ют вырăнта çемье çавăрса тĕпленеççĕ вĕсем...»

Мари кинемейĕн килте пурăнса йăха малалла тăсаканĕ те пур-ха. Анчах...

Петĕр хĕрĕх енне сулăннă ĕнтĕ, ăна вара амăш сĕчĕпе те, кайран та ăс кĕмен. Акă кăçал çуркунне кăна-ха инçех мар вырăнсенчен таврăнчĕ. Çавăнтанпа ниçта та ĕçлемест, хавaслă пурăнма тăрăшать имĕш. Вăй питти арçын амăш ĕнси çинче хăйне лайăх туять. Хуçалăхра пĕр ĕç те тумасть, эрех-сăрапа иртĕхсе çынлăха çухатнă кăна мар, хăй амăш сĕчĕпе ӳснине те тахçанах маннă...

Сасартăк çенĕкре хĕнтĕртеттернĕ сасă илтĕнчĕ: такам килчĕ пулас. Пӳрт алăкне уçнă-уçман вара хĕрĕнкĕ ывăлĕ ватă амăшĕнчен укçа тапăнса ыйтма пуçларĕ: «Эрех туянма кирлĕ. Санăн укçа пур, пар! Пар тетĕп!»

Эрех валли укçа парсан хăйĕн ывăлĕн пурнăçне хăй таптаса пынăн туйăннипе чылай куляннă карчăк ку хутĕнче те хирĕçлерĕ. Лешĕ вара шурă çуçлĕ, пичĕ çинче «пурнăç йĕрĕсем» нумай пулнине пăхмасăр илемлĕ сăн-питлĕ амăшне вырăн çинчен пĕррех! туртса антарчĕ. Çакна кĕтмен Мари кинемей нимĕн тума аптăрарĕ. Хăйĕн тăван ывăлĕ выльăхла хăтланнине ĕненес килменнипе унăн куççуль юхса анчĕ. Малалла шутлама вăхăт пулмарĕ – пуçран арçыннăн пысăк чышки лекрĕ. Пĕрре, иккĕ, виççĕ... Миçе хутчен çапнине те пĕлмерĕ карчăк: пуçĕ, аллисем, кĕлетки пĕтĕмпех ыратнăн туйăнчĕ ăна.

– Çак çĕçĕпе чиксе пăрахăп ак! – таçтан туртса кăларнă çĕçĕпе сулкаласа кăшкăрса хăратрĕ ывăлĕ амăшне.

Çĕççине хăй çумĕнчех илсе çӳренĕ-ши ĕнтĕ?

Хăйра илчĕ. Çĕççе çивĕчрех тăвасшăн иккен.

– Малтан сана вĕлеретĕп, кайран – сан хĕр ачу-на та! – тарăхса кăшкăрчĕ арçын.

Йĕркеллĕ пурăнманшăн аппăшĕ ăна час-часах вăрçса илет. Çавăнпах Петĕр Нинăна юратмасть те...

Сасартăк Мари кинемей умне çĕçĕ вĕçсе килчĕ. Çат! туса унран темиçе сантиметрта урай хăмине тирĕнчĕ.

– Эй, Турăçăм! – ӳлесех йĕрсе ячĕ хĕрарăм, – мĕншĕн-ши?! Ывăлăм, ан вĕлер! Ывăлăм! – куççуль витĕр тархасларĕ амăшĕ.

Лешĕ вара ухмаха тухнă тейĕн. Аллинчи шурă ал шăллине (метр çурăран та вăрăмрахскер арçын аллине тем хушăра лекнĕ тата!) амăшĕн мăйĕ тавра явaларĕ.

– Чиксе мар, çакса вĕлеретĕп! – хăратрĕ çав хушăрах пӳтсĕр.

Ал шăллине вĕçĕсенчен тытрĕ. Амăшне çапла çӳлелле çĕклерĕ... Мари кинемейĕн куçĕ тĕттĕмленчĕ, сывлăшĕ пӳлĕнчĕ. Аллисемпе ал шăллине мăйĕ çумĕнчен сирме хăтланчĕ карчăк. Урăх нимĕн тума та вăй çитмерĕ унăн. «Çапла иккен пурнăç вĕçĕ манăн...», – шутласа илме ĕлкĕрчĕ вăл.

Турă илтрĕ пулас. Ывăлĕ амăшне кăмака çумĕнчи кашта таран çĕклесе çитерме вăй çитереймерĕ-ши – пăрахрĕ. Айккинелле пăрăнчĕ.

Амăшĕ кирлĕ сăмахсем тупса ывăлне лăплантарма тăрăшрĕ, хăйĕн чĕри вара сиксе тухасла тапрĕ. Çĕрĕпе мĕн курмалла-ши тата?

– Мана ан тĕкĕн, хăвăн пурнăçна пĕтерсе хуратăн вĕт, – терĕ Мари кинемей.

– Юрĕ, çитĕ паянлăх, анчах эпĕ унта таврăнассинчен пĕрре те хăрамастăп, – пулчĕ хурав.

Çĕрĕпе çывăрмарĕ Мари кинемей, куç хупса çеç выртрĕ. Ирпе вара ывăлĕ каллех таçта тухса кайрĕ. Каçалапа чӳречерен пăхсан шăпах ывăлĕ киле утнине асăрхарĕ. Хăвăртрах пахчана тухса тарчĕ амăшĕ...

Ывăлĕ килте чух тăван кил алăкĕсем амăшĕ валли хупă. Мари кинемей хӳтлĕхе хĕрĕпе кĕрӳшĕн килĕнче тупрĕ.

**Пичете О. Кузнецова дознавателĕн материалĕ тăрăх Н. Николаева хатĕрленĕ.**

## Шкул хаçачĕсен конкурсĕ

Ноябрьте «Школа-пресс-2012» ятпа шкулта тухакан хаçатсен Пĕтĕм Раççейри 7-мĕш конкурсĕ пуçланчĕ. Ăна «Грани» хаçат ирттерет.

Иртнĕ çул конкурса çĕр-шыври 51 издани хутшăннă.

Кăçалхи конкурсра Космонавтика çулталăкне тата тăван тавралăха халалланă чи лайăх материалсене уйрăммăн палăртаççĕ.

Конкурс пирки тĕплĕнрех çак сайтра пĕлме пулать: http://www.grani21.ru.

## Редакци почтинчен

# Чи асли – 87-ре, чи кĕçĕнни – 57-ре!

Ноябрĕн 10-мĕшĕнче Орининти Культура çуртĕнче Элĕкри ветерансен хорĕ концертпа пулчĕ.

Халăх ятне тивĕçнĕ коллективри çынсемпе вырăнти ветерансен канашĕн ертӳçи А. Тимофеев паллаштарчĕ. Унăн сăмахĕнчен эпир кӳршĕ районĕнче юрă-кĕвĕне чунĕпе парăннă çынсем çинчен пĕлтĕмĕр. Хорта çирĕм çичĕ ветеран. Унăн художество пултарулăх ертӳçинче В.И. Терентьев тăрăшать. Йышра чи асли 87 çулта! иккен, чи кĕçĕнни вара 57 çулта. Малтан Элĕк районĕнче тĕрлĕ ĕçре, тĕрлĕ должноçра ĕçленĕскерсене паян пурнăçа юратни пĕрлештерсе тăрать. Хор репетицисене район центрĕнче ирттерет. Коллективра вара Элĕкри ветерансем кăна мар. Акă 80 çулхи пĕр кинемей 12 çухрăмран çӳрет!

Хор репертуарĕ те пуян, тĕрлĕ енлĕ. Çыннисем те, юррисем те питĕ килĕшрĕç пире, Оринин ял тăрăхĕнче пурăнакансене. Кӳршĕсем ырă кăмăллă, тарават пулни сисĕнчĕ.

Хамăрăн Культура çуртĕнче çакăн пек пултаруллă коллективпа паллашма май тупса панăшăн эпир Муркашри чăх-чĕп фабрикин ертӳçине Н.Г. Ванеркина район хаçачĕ урлă тав сăмахĕ каласшăн.

Пирĕн районти ветерансен хорне Элĕксем хăнана чĕнсе хăварчĕç. Вĕсем те маххă памасса шанатпăр.

**Куракансен ячĕпе И. СКВОРЦОВА.**

**Компания продает анионовые прокладки, подгузники и защитные средства от электромагнитных и радиационных излучений. Тел.: 8-927-850-18-58. 6-10.**

для пайщиков
СБЕРЕЖЕНИЯ
• стабильный доход
• возможность пополнения и частичного снятия
ЗАЙМЫ НА ЛЮБЫЕ ЦЕЛИ
• на ремонт и подготовку к зиме
• для пенсионеров ЛЬГОТНЫЕ УСЛОВИЯ
• на покупку и строительство жилья под МАТЕРИНСКИЙ КАПИТАЛ
КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ “СОДРУЖЕСТВО”
Отделение № 3, с.Моргауши
ул.50 лет Октября, д.23, 2 этаж
www.kpksodrugestvo.ru
62-6-86
8 900 333 0001

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 2-5.**

**В с. Моргауши по ул. Красная Площадь, д. 3 (при «Станции юных техников») предоставляем услуги на все виды ШИНОМОНТАЖНЫХ РАБОТ, ремонт боковых порезов на шинах, ремонт бескамерных колес, балансировка колес. Принимаем заказы на шиповку резины. «Переобувка» от 500 руб. Работаем с 8-00 час. до 20-00 час. без выходных. Тел.: 8-953-010-21-34, 8-905-029-75-90. 2-2.**

**В Москву требуются фасовщицы, грузчики. Жилье, питание – бесплатно. З/п 30000 руб. Тел.: 8(8352)36-42-92, 36-42-94. 5-5.**

**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ от 3000 руб. Установка, гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 8-12.**




**БЕТОН, РАСТВОР любых марок. Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778. Песок, ОПГС (гравмасса), щебень. Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.**
Доставка миксерами, самосвалами. 43-50.

**1 декабря с 9-00 час. до 17-00 час. в районном Доме культуры состоится продажа обуви. Любая пара 700 рублей, г. Киров.**

На производства в Москву и Московскую обл. требуются: ФАСОВЩИЦЫ, ГРУЗЧИКИ Питание, проживание и служебный транспорт – **БЕСПЛАТНО**. Вахта. Выезд группами до предприятия. Гарантии. З/п 25 000-35 000 руб. Тел.: 8(8352)29-80-30. 2-3.



Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 62-3-80. 1-10.

| | суббота 26 ноября | | | | воскресенье 27 ноября | | | | понедельник 28 ноября | | | | вторник 29 ноября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | -1 | -1 | 0 | -3 | -2 | -1 | 0 | -1 | -1 | 0 | +1 | 0 | +1 | +1 | +1 | -1 |
| Давление мм | 746 | 747 | 745 | 743 | 741 | 740 | 740 | 741 | 739 | 736 | 733 | 732 | 731 | 732 | 734 | 736 |
| Влажность % | 92 | 91 | 80 | 87 | 89 | 93 | 82 | 89 | 91 | 90 | 87 | 89 | 92 | 95 | 82 | 88 |
| Ветер м/сек | З 4 | Ю-З 5 | Ю-З 7 | Ю-З 6 | Ю 7 | Ю 8 | Ю-З 8 | Ю 5 | Ю 6 | Ю 10 | Ю 9 | Ю 6 | Ю 5 | Ю-З 6 | Ю-З 6 | Ю 3 |
| Солнце восход/заход | | 08:50 | 16:29 | | | 08:52 | 16:28 | | | 08:54 | 16:27 | | | 08:55 | 16:26 | |
| Луна восход/заход | | 10:12 | 17:23 | | | 11:07 | 18:35 | | | 11:46 | 19:54 | | | 12:14 | 21:14 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | | | | | |

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Куплю пух-перо сухое и мокрое. Тел.: 8-903-379-01-23.**

* * *

**Продается Лада-2107 2011 года выпуска, цвет белый, пробег 3300 км. Тел.: 8-960-307-15-95.**

* * *

**Куплю корову, бычка, телку, овец. Тел.: 8-905-342-39-43. 8-13.**

* * *

**Продается черно-белая корова, в августе 4 отел. Цена договорная. Тел.: 8-965-685-54-80.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 4-12.**

* * *

**Услуги буровой машины для рытья колодцев разного диаметра, с доставкой, установкой колец. Тел.: 8-903-379-09-01. 6-6.**

* * *

**Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, песок речной, гравмассу, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 5-5.**

* * *

**Куплю предметы старины: ама, хушпу серебряные от 20 000 до 100 000 рублей. Деньги сразу. Возможен залог под 0,4 процента в день. Тел.: 8-937-375-88-55. 8-10.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатăп. Тел.: 8-905-343-60-63. 5-10.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, пăру, сурăхсем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57. 4-5.**

* * *

**Лидеры и всех, кого интересует простой и приятный способ иметь дополнительный доход! Тел.: 8-960-310-01-29. 2-5.**

* * *

**Февральте виççĕмĕш пăруламалли хура-шурă ĕне тата февральте пăруламалли хура тынашки сутатпăр. Тел.: 8-937-950-59-35, 60-0-35.**

* * *

**Купим однокомнатную квартиру в с. Моргауши. Тел.: 8-927-841-15-49.**

* * *

**Апрельте пăруламалли хĕрлĕ тĕслĕ тынашки сутатпăр. Тел.: 8-937-958-46-65.**

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:180501:122, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, земельный участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:180501, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Продаю: гравмассу, щебень, песок, керамзит, бетон, торф, чернозем. С доставкой. Скидки. Тел.: 8-927-668-70-15. 13-13.**

**Продаются мотоблоки агро, угро, нева SUBARU, ока, каскад, целина, пахарь. Картофелекопалка, грабли и другое навесное оборудование, двигатели на мотоблок по ценам завода-изготовителя. Доставка. Гарантия. Мы облегчим ваш труд. Тел.: 8-987-664-62-32, 8-960-303-44-10. 2-2.**

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете панă 25.11.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4362.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.